Декабрĕн 9-мĕшĕ – Тăван çĕр-шыв паттăрĕсен кунĕ

# Яланах пирĕн асра

Тăван çĕр-шыв паттăрĕсен кунне уявласси Раççейре 2007 çулта пуçланчĕ. Халĕ вара çуллен çак куна декабрĕн 9-мĕшĕнче паллă тăватпăр. Хăйĕн пуçламăшне вара ку кун 16-мĕш ĕмĕртенех илет. Ун чухне декабрь уйăхĕнче Иккĕмĕш Кĕтерне императрица Çветуй Георгий Победоносец орденне туса хунă.

Хальхи вăхăтра Тăван çĕр-шыв паттăрĕсен кунĕнче Совет Союзĕн Геройĕсене, Социализмла Ĕç Геройĕсене, Раççей Федерацийĕн Геройĕсене, Мухтав орденĕн кавалерĕсене чысласçĕ. Вĕсен ячĕсем ĕмĕр-ĕмĕр асран тухас çук.

**Григорий Алексеевич Алексеев.** Совет Союзĕн Геройĕ.1903 çулта Исетеркке ялĕнче çуралса ӳснĕ. 1944 çулта вăрçăра çĕре кĕнĕ.

**Яков Анисимович Анисимов.** Совет Союзĕн Геройĕ. 1906 çулта Уйкас Апашра çуралса ӳснĕ. 1944 çулта вăрçăра çĕре кĕнĕ.

**Борис Михайлович Васильев.** Совет Союзĕн Геройĕ. 1913 çулта Çĕмĕртлĕх Чемей ялĕнче çуралса ӳснĕ. 1955 çулта вăрçă хыççăн çĕре кĕнĕ.

**Алексей Иванович Воробьев.** Совет Союзĕн Геройĕ. 1915 çулта Çурлатри ялĕнче çуралнă. 1952 çулта вăрçă хыççăн çĕре кĕнĕ.



**Илья Григорьевич Мешаков (сăн ӳкерчĕкре).** Совет Союзĕн Геройĕ. 1924 çулта Пăсăрман ялĕнче çуралса ӳснĕ. 1971 çулта çĕре кĕнĕ.

**Александр Артемьевич Быков.** Мухтав орденĕсен тулли кавалерĕ. Хуракасси выççăлккинче 1921 çуралса ӳснĕ. 1972 çулта çĕре кĕнĕ.

**Евтихий Андреевич Андреев.** Социализмла Ĕç Геройĕ. 1912 çулта çуралнă. Вăрçăра кăна мар, мирлĕ ĕçре те паттăрлăх кăтартма вырăн пур иккен. Вăрçă участникĕ, Варпуç ялĕнче çуралса ӳснĕскер, 30 çул хушши "Знамя труда" колхоза ăнăçлă ертсе пычĕ. Ял хуçалăх производствине аталантарассишĕн çине тăрса ĕçленĕ. 1981 çулта çĕре кĕнĕ.

**Ольга Федоровна Федорова.** Социализмла Ĕç Геройĕ. 1929 çулта Çатракасси ялĕнче çуралса ӳснĕ. Малтанах тăван уй-хир бригадинче ĕçленĕ, кайран Чул хула облаçĕнче дояркăра тăрăшнă, ĕçре тава тивĕçлĕ пысăк ӳсĕмсем тума пултарнă. Паян вăл çамрăк ăрăва воспитани парас ĕçе хутшăнать.

**Николай Валерьевич Смирнов.** Раççей Геройĕ. 1967 çулта Кашмаш ялĕнче çуралнă. Ашшĕ-амăшĕн, маттур юлташĕсен, çĕр-шыв хӳтĕлевçисен ырă тĕслĕхне малалла тăсса Кавказ çар регионĕнче хăйĕн çар тивĕçне пурнăçланă чухне паттăрлăхпа хăюлăх кăтартса 1994 çулта пуçне хунă.

Тăван çĕр-шывра та, районта та Тăван çĕр-шыв паттăрĕсен кунне халалласа мероприятисем сахал мар ирттерçĕç. Анчах та çакă вăхăтлăх мероприяти кăна анчах ан пултăрччĕ. Шкулсенче, музейсенче, ытти вĕренӳ учрежденийĕсенче ирттерекен кашни урок уйрăмах çак кунсенчен чăннипех паттăрлăх урокĕ пулса тăмалла. Вăхăт иртĕ, анчах та çĕр-шыв паттăрĕсен ячĕсем ан тĕксĕмленччĕр.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Росреестр хыпарлать

# Вăхăт – 2015 çулхи мартăн 1-мĕшĕччен

Уйрăм çынсен пурăнмалли çурчĕсен "дача амнистийĕн" вăхăчĕ вĕçленсе пырать. Харпăр хăйĕн пурăнмалли çуртне ансат мелпе регистрацилеме, халăхри пек каласан "дача амнистийĕпе" усă курма, 2015 çулхи мартăн 1-мĕшĕччен кăна май пулĕ. Росреестрăн Чăваш Республикинчи управленийĕ вăхăта тăсмасăр паянах харпăр хăйĕн çурчĕсене харпăрлăха çирĕплетсе регистрацилеме сĕнет. Ку вăл хăйсен çуртйĕрне харпăр хăй çурт-йĕр строительстви валли е килти хушма хуçалăха тытса пыма уйăрнă çĕр лаптăкĕ çинче туса лартнă граждансене пырса тивет. Регистраци пирки калакан саккунпа килĕшуллĕн 2015 çулхи мартăн 1-мĕшĕченхи тапхăрта харпăр хăйĕн çурт-йĕр строительствин объектне регистрацилеме кирлĕ пĕртен-пĕр документ вăл çĕр участокĕн харпăрлăх правине çирĕплетекен документ пулса тăрать. Чăваш Енре регистраци тапхăрĕ календарлă 5 кунран тытăнса 10 кун таран йышăнать. Патшалăх пошлини – 200 тенкĕ.

2015 çулхи мартăн 1-мĕшĕ хыççăн пурăнмалли çурта харпăрлăха çирĕплетесси самай кăткăсланĕ. Çурта хута яма ирĕк илмелле пулĕ. Ăна валли вара çак документсене хатĕрлеме тивĕ:

1. Çĕр участокĕн харпăрлăх правине çирĕплетекен документ.
2. Участокăн градостроительнăй планĕ.
3. Строительство ĕçĕсене туса ирттерме ирĕк илни.
4. Капиталлă строительство объектне йышăннин акчĕ (строительство ĕçĕсене сире килĕшӳпе пурнăçласа панă пулсан).
5. Туса лартнă объект техрегламент требованийĕсене тивĕçтернине çирĕплетекен документ.
6. Туса пĕтернĕ пурăнмалли çурт техусловисене тивĕçтернине çирĕплетекен документ, инженерипе техника сечĕсене пăхса тăракан организацисен (электричество, шыв, канализаци, газ) представителĕсем ала пуснисем.
7. Пурăнмалли çурт тата сетьсем çĕр участокĕ çинче вырнаçнине кăтартакан схема.

Росреестр çавна та аса илтерет. Енчен те çĕр участокне харпăр хăйĕн хушма хуçалăхĕ е дача хуçалăхĕ, пахча, сад валли, çавăн пекех харпăр хăйĕн гараже пурăнмалли çурт-йĕр строительстви, сад çурчĕ е хуçалăхри ытти çурт-йĕр валли уйăрнă пулсан, кун пеккисемшĕн "дача амнистийĕ" вĕçленессине палăртман.

"Дача амнистийĕпе" Чăваш Республикинче кăçал кăна 1500 ытла пурăнмалли çурт-йĕре харпăрлăха çирĕплетсе регистрациленĕ. "Дача амнистийĕ" вăя кĕнĕренпе вара Муркаш районĕн территорийĕнче уйрăм çынсен 2300-е яхăн пурăнмалли çуртне харпăрлăха çирĕплетнĕ.

**Л. ПЕТРОВА,**
**Росреестрăн Чăваш Республикинчи управленийĕн Муркаш районĕнчи пайĕн пуçлăхĕ.**

# Тӳлевсĕр приватизаци вĕçленет

**Çынсене хăйсен хваттерĕсене тӳлевсĕр майпа приватизацилеме уйăрнă вăхăт вĕçленсе пырать. Виçĕ уйăх кăна юлчĕ. Çавăн пирки аса илтерет Росреестрăн Чăваш Республикинчи управленийĕн Муркаш районĕнчи пайĕн пуçлăхĕ Л. ПЕТРОВА:**

– Муниципалитет çурт-йĕрне тӳлевсĕр майпа уйрăм çынсен харпăрлăхне парасси 2015 çулхи мартăн 1-мĕшĕнче вĕçленет. Унччен ĕлкĕрес тесен ку ыйтупа паянах ĕçлеме тытăнас пулать.

Харпăрлăх правин патшалăхăн пĕрлехи реестрĕн даннăйĕсем тăрăх, кăçал кăна республикăра 4,5 пин ытла хваттере приватизациленĕ. Пĕтĕмпе вара тӳлевсĕр приватизаци пуçланнăранпа уйрăм çын харпăрлăхне 162,5 пин ытла объект куçнă.

Чăваш Енре хваттерсене ытларахăшĕ çемьен икĕ е виçĕ членĕ çине харпăрлăха куçарать.

Росреестртан çавна та аса илтеретпĕр: хваттере приватизацилесси обязательнăй майпа Росреестра пырассипе тата хваттерĕн харпăрлăх правине патшалăх регистрацийĕ тунă пирки свидетельство илессипе çыхăннă.

"Путене" – 20 çулта

# Ĕмĕтсем пысăк, шухăшсем анлă

Муркашри 27 номерлĕ "Путене" ача сачĕ 1994 çулхи декабрĕн 4-мĕшĕнче ĕçлеме тытăннă. Кунта çӳрекен ачасем валли условисем лайăх, вылямалли тата çывăрмалли пӳлĕмсем пысăк, канма, шкула хатĕрлеме майсем чылай. Музыка тата физкультура залĕсенче ачасене аталанма пĕтĕмпех пур.

Хальхи вăхăтра "Путене" ача садĕнче 12 ушкăн йĕркеленĕ: пĕр ушкăнĕ – ачасен калаçăвне аталантармалли, ыттисем – пĕтĕмĕшле аталану енĕпе ĕçлекеннисем.

Ача садне çӳрекенсен йышĕ çулсеренех ӳссе пырать. Калăпăр, 5 çул каялла 145 ача çӳренĕ пулсан, кăçалхи вĕренӳ çулĕнче 276 ача çӳрет.

Ача йышĕ пысăкланнипе пĕрлех "Путене" ача сачĕн çитĕнĕвĕсем те нумайланса пыраççĕ. Каласа хăвармалла, педагогсемпе тата ытти ĕçченсемпе садика туллин тивĕçтернĕ. Пирĕн педагогсем пуян опытлă та анлă тавра курăмлă. Учреждениере пурĕ 30 педагог тăрăшать. Вăл шутра: пĕр аслă воспитатель, музыка ертӳçисем иккĕн, пĕр логопед тата пĕрремĕш квалификаци категорине çирĕплетнĕ 25 педагог.



Чи пултаруллă воспитательсем хушшинче Н. Порфирьевăпа И. Кожевниковăна ырăпа палăртмалла. Вĕсем иккĕшĕ те Чăваш Республикин Президенчĕн грантне тивĕçнĕ. О. Прокопьева – Республика Пуçлăхĕн стипендиачĕ. Л. Щукина, Т. Толстова, Н. Алексеева, И. Аксендарова, А. Тимофеева республика шайĕнчи тĕрлĕ конкурссенче мала тухнă. Р. Андреева, А. Тихонова, Г. Лоцманова, А. Крысина, Н. Смелова тата ыттисем те район шайĕнче палăрнă. Пирĕн воспитательсем чуна парса ĕçлеççĕ.

Педагогсем кăна мар, ача садне çӳрекенсем те чылай конкурса хутшăнса республикăра, районта малти вырăнсене çĕнсе илеççĕ. Ӳсĕмсем пурри вара пире малалла татах та лайăххах ĕçлеме хистет, хавхалантарать.

Ача сачĕ пĕтĕмĕшле хăй те конкурссене сахал мар хутшăнса мала тухать. 2010 çулта пирĕн ача сачĕ Чăваш Республикин Президенчĕн грантне тивĕçрĕ. Физкультура, музыка залĕсем валли 200 пин тенкĕлĕх оборудовани, ушкăнсене вырнаçтарма сĕтел-пукан туянтăмăр. Çав çулах Пĕтĕм Раççейри "Ачасем – ача сачĕсене" регион шайĕнчи конкурсра "Чи лайăх ача" сачĕ пулса тăтăмăр.

2012 çулта Чăваш Республикин Вĕренӳпе çамрăксен политикин министерстви йĕркеленĕ конкурса хутшăнса "Путене" 100 пин тенкĕлĕх грант çĕнсе илчĕ. Укçа-тенке тĕллевлĕ усă курса ачасене тĕрĕс калаçассинче пулăшма логопед ушкăнĕ йĕркелерĕмĕр. Унта сĕтел-пукан тата ытти кирлĕ хатĕр туянса вырнаçтартăмăр.

Пирĕн ача сачĕ тăван ен культури çине уйрăмах пысăк тимлĕх уйăрать. Çапла майпа шкула кайиччченех пирĕн ачасем Чăваш Ене, тăван чĕлхене, чăвашсен культурине тата историне хисеплеме вĕренеççĕ. Садикра пĕчĕк музей та ĕçлет. Кунта кашни ачана интереслĕ. Музейри "асаттепе асанне" ачасене сăпка юррисене те юрлама вĕрентеççĕ, чăвашсен кăмакинчен мĕнле апат-çимĕç "тухнине" те кăтартаççĕ. Тăван ен культурине сăнласа паракан кĕтессем ачасем валли кашни ушкăнрах пур. Чăвашсен çи-пуçĕ яланах ачасен куçĕ умĕнче. Çак майсемпе усă курса, тĕрлĕ вăйăсем выляса чăвашлăха упрама, юратма вĕренеççĕ ачасем.

Çакна та асăнса хăварас килет. Кашни вĕренӳ çулĕнчех ача садĕнче тăван тавралăха юратма хăнăхтарассипе методпĕрлешӳсен занятийĕсене ирттеретпĕр. Çавăнпах "Тăван тавралăха юрат тата пĕл" конкурсра ачасем малти вырăнсене йышăнаççĕ.

Паллах, ачасене килĕштĕр, вĕсене аталанмалли майсем пулччăр тесе нумай тăрăшма тивет. Эпĕ, садик ертӳçи пулнă май, хам та вăхăт ыйтнипе тан пырса асталăха ӳстерме тăрăшатăп. Çак тĕллевпех Санкт-Петербург, Мускав тата Сочи хулисенчи тĕрлĕ курссемпе вĕрентӳсене, конференцисене хутшăнтăм. Унта пухнă опыта кунта усă курма тăрăшатпăр.

Ĕмĕтсем яланах пысăк, шухăшсем те анлă. Ку вăл – вăхăтпа тан, тен хăш-пĕр енсемпе маларах та, пыракан ача садне йĕркелесси: ача садне çӳрекенсене пĕтĕмĕшле аталантарнипе пĕрлех психологи сывлăхĕ тĕлĕшĕнчен те аталантармалла. Ĕмĕтсем пурнăçланасса ĕненетпĕр.

Ача сачĕн çуралнă кунĕпе "Путене" ача сачĕн воспитателĕсемпе ытти пур ĕçчене, ача садне çӳрекенсене тата пирĕн ашшĕ-амăшĕсене чĕререн саламлатăп. Çирĕп сывлăх, çитĕнӳсем, телей сунатăп.

**И. ФЕРАПОНТОВА,**
**"Путене" ача сачĕн ертӳçи.**

Хаксем йӳнелчĕç

# Паттăрсене чысласа – паха топливо!

Çитес ытлари кун, раштавăн 9-мĕшĕнче, Раççейре пурăнакансем Тăван çĕр-шывăн паттăрĕсен кунне паллă тăваççĕ. Вĕсен хушшинче паттăрсене сума сăвакан водительсем те чылай. Вĕсем хăйсен автомашинине иккĕленӳллĕ бензин е солярка ярасран сыхланни – техника ĕмĕрне тăсни, укçа-тенке перекетлени. Çакă та – мирлĕ пурнăçри хăйне евĕр паттăрлăх.

Муркаш районĕнчи водительсем перекетлĕх пирки самантлăха та манмаççĕ. Вĕсенчен чылайăшне юлашки вăхăтра "Максан" автозаправкăра курма пулать. Хăйсемпе калаçнă тăрăх кунта сутăнакан сĕрмелли-çунтармалли материал пахалăхĕ килĕшет вĕсене! Хакĕсем те – топливăн шанчăклăхне кура.

Нумай пулмасть водительсен сĕнĕвне тивĕçтерсе "Максан" автозаправка дизель топливи те сутма тытăнчĕ. Ку çĕнĕлĕхе водительсем хапăлласах йышăнни курăнать.

Çак кунсенче вара "Максан" автозаправка хăйĕн шанчăклă тусĕсем валли сĕрмелли-çунтармалли материалсем йӳнелни пирки пĕлтерет.

Васкăр! Пĕр утăм тусах топливăллă та пулăр, Çĕнĕ çул умĕн укçа та перекетлĕр!

**Муркашри "Сельхозтехникăри" "Максан" автозаправка.**

Прокуратурăра

# Юрăхсăра кăларнăшăн

**"Çул çитмен çамрăксем Мăн Сĕнтĕрте вырнаçнă "Агронефтепродукт" СХПСК пурлăхне – пластмасса плафонсене, энерги перекетлеме май паракан лампочкăсене – юрăхсăра кăларнăччĕ. Çавăншăн явап тыттарнă-ши вĕсене?"**

**Мăн Сĕнтĕр сали. Ятне палăртман.**

Çакăн пек хăтланни вандализм шутланать. Ку йĕркесĕрлĕхшĕн РФ Уголовлă кодексĕпе килĕшуллĕн явап тыттарасси 14 çултан пуçланать. Çакăншăн вĕсене 40 пин тенкĕ таран штрафлама пултараççĕ е виçĕ уйăхри ĕç укçин е ытти тупăш шайне шута илеççĕ. Çавăн пекех 360 сехетлĕх ятарлă ĕçе явăçтараççĕ е ытти айăплавпа усă кураççĕ.

Енчен те çак йĕркесĕрлĕхе çул çитмен çамрăк тунă пулсан уншăн ашшĕ-амăшĕ, саккунлă представителĕ ответ тытать. 14 – 18 çулсенчи çамрăк вара хăй ĕçĕсемшĕн хăй ответлă. Енчен те çул çитмен çамрăкăн тупăш е пурлăх çук пулсан сиен калăпăшне ашшĕ-амăшĕн е саккунлă представителĕн саплаштарма тивет, енчен те сиен ун айăпĕпе пулнине çирĕплетнĕ пулсан.

Çыру авторне çапла хуравлас килет. "Агронефтепродукт" СХПСК территорийĕнче йĕркене пăснă факт пулнăччĕ. Çул çитмен çамрăксен ушкăнĕ Мăн Сĕнтĕрте çĕрлехи вăхăта савăнăçлă ирттернĕ. Пуçа минретнĕ хыççăн ирхи тăватă сехетре Козьмодемьянск хулине çуран утма шухăшланă. Хăйсем каланă тăрăх автозаправка умĕн иртнĕ чухне сигарет, çимелли туянас тĕлĕшпе унталла пăраннă. Кунта ытти çынсем те пулнине шута илмесĕр обществăлла йĕркене пăснă. Пĕри плафон çаварса кăларма пуçланă, ăна курнипе ыттисем те юлман, энерги перекетлеме май паракан вунă лампочкăна ватса юрăхсăра кăларнă. Çапла вара çамрăксем 1550 тенкĕлĕх тăкак кӳнĕ тата территорие илемсĕрлетнĕ. Çийĕнчех вĕсен ашшĕ-амăшĕпе çыхăнма тивнĕ. Сиен кӳнине каярах саплаштарнă, каçару ыйтнă.

Ниçта та ĕçлеменни, вĕренменни çакăн пек йĕркесĕрлĕх патне илсе пырать те ĕнтĕ. Вĕсем тĕлĕшпе пуçарнă ĕçе пăхса тухнă. Йĕркесĕрлĕх тунă çамрăксем малашнехи уйăхсенчи вăхăта хăйсем ирттерес тенĕ пек ирттерейместĕ, ăçта каяс тенĕ çĕре кайма пултараймаççĕ, çавăн пекех уйăхра вĕсен пĕр хутчен регистрацире пулмалла тата ытти йĕрке те пăхса хунă.

**Ю. СЕМЕНОВ, прокурор çумĕ.**